## Шлябин Сергей Александрович –
## пултаруллă ертӳçĕ

Шлябин Сергей Александрович 1922 çулхи мартăн 27-мĕшĕнче Куракăшра çуралнă. Пĕр улшăнмасăр 25 çул «Правда» колхоза ăнăçлă ертсе пырать. Юлса пыракан колхоз районта кăна мар, республикăра та малтисен ретне тăрать.Техникăлла культурăсене туса илессипе пысăк çитĕнӳсем тунăшăн С. А. Шлябина 1966 çулта Ленин орденĕ парса чыс тунă. 1967 çулта унăн ятне Чăваш Республикин Ĕç мухтавĕпе Паттăрлăхĕн Хисеп кĕнекине кĕртнĕ. С.А. Шлябина çавăн пекех «Отечественнăй вăрçă» орденпа. Чылай медальсемпе наградăланă. Ĕçри паттăрлăхшăн Ленин, Октябрь Революцийĕ,Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялавĕ Орденсене илме тивĕç пулнă. Ăна ЧАССР Верховнăй Совет Президиумĕн Хисеп грамотипе наградăланă, «ЧАССР ялхуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» ята панă.

